Аня МАТВЕЕВА, 11 А класс,
Калайкасси шкулĕ



«Хыçалти парта» чиперуксене «Шкул пики» сăнÿкерчĕксен конкурсĕнче хутшăнма ыйтать. Конкурса пуш уйăхĕн 8-мĕшĕ тĕлне вулакансем пĕтĕмлетĕç. Çĕнтерÿçĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ. Сиртен сăн ÿкерчĕксем кĕтетпĕр.

Психологи тестчĕ

## СИРĔН ФАНТАЗИ АТАЛЛАННĂ-И?

**Ыйтусем çине «çапла», е «çук» тесе хуравлăр. Кашни хуравшăн тивĕçнĕ баллсене хушăр.**

1. Эсир ÿкеретĕр-и? /«çапла»—1, «çук»—2/
2. Час-часах тунсăхлатăр-и? /«çапла»—1, «çук»—2/
3. Чăн-чăнах та пулса иртнĕ япала çинчен каласа панă чух, интереслĕрех тата илемлĕрех пултăр тесе эсир хăвăртан мĕн те пулин хушса калама пултаратăр-и? /«çапла»—1, «çук»—0/
4. Ĕçре хăвăра лайăх енчен кăтартма тăрăшатăр-и? /«çапла»—2, «çук»—1/
5. Сирĕн почерк шултăра та пĕр пек тикĕс мар? /«çапла»—1, «çук»—0/
6. Тум-тир суйланă чух эсир ытларах модăна мар, хăвăрăн илемлĕх туйăмне шанатăр? /«çапла»—2, «çук»—0/
7. Уроксенче сире кичем пулсан эсир яланах пĕр евĕр ÿкерчĕксем хут çине чĕрсе ÿкеретĕр-и? /«çапла»—0, «çук»—1/
8. Пĕр-пĕр кĕвĕ итленĕ чух, çав кĕвĕпе çыхăннă сăнар куç умне тухса тăрать-и? /«çапла»—1, «çук»—0/
9. Вăрăм çырусем çырма кăмăллатăр-и? /«çапла»—2, «çук»—1/
10. Эсир хăш-пĕр чух тĕлĕнмелле тĕлĕксем куратăр-и? /«çапла»—1, «çук»—0/
11. Тахçанах çитсе курас текен асамлă вырăн çинчен юлташсем каланинчен кăна пĕлетĕр. Эсир ăна куç умне кăларса тăратма пултараятăр-и? /«çапла»—1, «çук»—0/
12. Киносенче час-часах йĕретер-и? /«çапла»—1, «çук»—0»/

**13-15 балл. Сирĕн тĕлĕнмелле вăйлă аталаннă фантази. Енчен те эсир унпа тĕрĕс усă курма пĕлетĕр пулсан сирĕн пурнăç татах та интереслĕрех, кăсăклăрах пулĕ, тус-тантăшсемпе юлташсене савăнăç кÿме пултаратăр. Эсир хăть те мĕнле йывăрлăхсенчен те çăмăллăнах тухма пултаратăр.**

**9-12 балл. Эсир хăвăрăн фантазие аталантарасси пĕтĕмпех хăвăртан килет. Хăш чухне ĕмĕтленни, сирĕн пурнăçра ырри çеç пулĕ тенине ĕненни те кирлĕ.**

**5-8 балл. Эсир çĕр çинче пурăнатăр. Ĕмĕтленесси, пурнăçлама йывăр плансем тăвасси — сирĕн валли мар. Анчах та ку çитменлĕх мар.**

## КĔТЕКЕНСЕМ ТЕЛЕЙЛĔ ТЕÇÇĔ...

**Пит çăмарти тăрăх вĕри куççуль юхса анчĕ. Куçа хупатăп та сана аса илетĕп. Ман умра эсĕ тăратăн...**

Пĕр саншăн çеç çакаслă тĕнчере пурăнатăп, пĕр саншăн çеç сывлатăп. Юрататăп сана, илтетĕн-и, чунăмçăм? Эсĕ кăна манăн чуна ăшăтатăн... Пĕр сан çинчен кăна шухăшлатăп...

Ялти культура çуртĕнчи ташă касĕнче пĕрремĕш хут эпĕ сана куртăм. Пире ман хĕр-юлташ паллаштарчĕ. Эсĕ мана тÿрех килĕшрĕн. Кашни кун килеймесен те, эрнере икĕ хут ман пата килсе çÿреттĕнччĕ. Кашни килмессерен парнесем илсе килеттĕнччĕ, чечек çыххи е урăх парнепе савăнтараттăнччĕ. Юрататăп теттĕнччĕ. Эпĕ вара нимĕн те чĕнейместĕм. Ытла та телейлĕччĕ эпĕ ун чухне. Хамăн туйăмсен çинчен калама та вăтанаттăм.

Пĕррехинче эсĕ ман пата килтĕн те... Санпа темĕн ырă мар пулса иртнине че пĕрле ташлатăр. Мĕншĕн? Кала-ха мĕншĕн? Хăш енпе вăл манран лайăхрах? «Костя, чунăмçăм, эпĕ сана çеç юрататăп. Мана урăх никам та кирлĕ мар, пĕр эсĕ çеç. Илтетĕни? Пĕр эсĕ çеç...» — хуравлас терĕм, анчах та... Кĕтмен ыйтусем, кĕтмен айăплавсем чĕлхене çыхлантарчĕç. Хама хÿтĕлесе пĕр сăмах та калаймарăм. Вăл мана ăнланасса, вăл ман юратăва ĕненессе шанрăм.

Эсĕ ăнланаймарăн, илтмерĕн. Сана çак суя сăмахсене кам каланă-ши? Çав уйрăлу касĕ хыççăн эсĕ урăх ман пата килмерĕн.

Пĕр çул иртрĕ пулсан та, эпĕ сана манаймастăп. Çутă сăну яланах асăмра. Манаймастăп сана, манаймастăп. Халĕ те пулин кĕтетĕп. Пĕрре çеç курасчĕ, çепĕç сассуна илтесчĕ. Эсĕ ман пĕртен-пĕр юратăвăм. Илтетĕн-и?

Тен, йăлтах каялла тавăрма май пур? Тен, эсĕ



тÿрех ăнлантăм. Малтанхи пек çепĕççĕн ыталамарăн, малтанхи пек... Калаçу тÿрех кĕтмен ыйтусенчен пуçланчĕ.

— Оля, мĕншĕн эсĕ мана юратмастăн? Славик ытларах килĕшет-и сана? Унпа тĕл пулатăн, ташă касĕсен халĕ те мана юрататăн? Тен, курса калаççан эпир пĕр-пĕрне ăнланăпăр, каçарăпăр. Тен, тен... Эпĕ çав-çавах шанчăка çухатмастăп, сана ĕмĕр тăршшĕпех кĕтме хатĕр.

**Маргарита,**
**Калайкасси шкулĕ**



# ЭТЕМ ТАТА ЦИФРА: ИНТЕРЕСЛĔ ФАКТСЕМ

**Этем питĕ хăйне евĕрлĕ те интереслĕ чĕр чун. Çитменнине питĕ уникаллă.**

Паянхи техникăпа ăслăлăх çÿллĕ шайра пулин те этем анатомийĕпе физиологийĕнчи фактсемпе цифрăсем ăс-тăна минретме пултараççĕ. Калăпăр, юн тымарĕсен пĕтĕмĕшле тăршшĕ 100 пин çухрăм. Чи вĕтĕ тымарсен диаметрĕ вара 4 микрометр кăна. Кунта темиçе интереслĕ ыйту çуралать. Пĕрремĕшĕнчен, организмри юн виçелĕхĕ, вăл кашни çыннăн расна пулин те /кĕлетке массинчен 7 процентне яхăн/ 7-10 литртан ытла мар. Çак калăпăш пур юн тымарне те тултарма çитмест. Иккĕмĕшĕнчен, эритроцитсен вăтам диаметрĕ 7 микрометр. Анчах та вĕсем 4 микрометр диаметрлă капилярсене хĕсĕнсе кĕреççĕ.

Физиологи тĕлĕшĕнчен пăхас пулсан, пурте йĕркеллĕ. Пĕрремĕш ыйту тăрăх пур тымар та юнпа тулман теме пулать. Органсемпе тĕртĕмсем хушшинче юн çапла майлашăнать. Çак вăхăтра интенсивлă ĕçлекеннисем ытларах юн илеççĕ. Лайăх чĕре сури тунă хыççăн апат-çимĕçе ирĕлтерме хырăмлăха юн ытларах килет, çак вăхăтра пуç мимине юн çитменнипе çынна ыйхă пусать. Иккĕмĕш ыйту çине вара хуравĕ тата ансатрах. Эритроцит чĕрĕ клетка, унăн мембрани хытса ларнă япала мар. Вăл хĕсĕк капилярсем тăрăх тăсăлса куçать.

***Çакăн йышши тĕлĕнтермĕшсем организмра мăй таран.***

Этем организмĕ $10^{15}$/1 квадриллион/ клеткăран тăрать;

Пирĕн скелетра 206 шăмă, 35 мăшăрлă тата 36 мăшăрсăр;

Пĕçĕ шăмми вертикаллă тăратсан 1600-1800 кг йывăрлăх тÿсет. Çак шăмă организмра чи вăрăмми — этем çÿллĕшĕнчен 27 процент;

Этеммĕн чи пĕчĕк шăммисем — хăлхари сас шăммисем. Вĕсем 0,05 грамм таяççĕ;



Хул калакĕ организмри нимĕнле шăмăпа та çыхăнман. Ăна 15 мышца тытса тăрать.

Шăмăра 50 процент чухлĕ шыв;

Çын 24 çула çитсен ÿсме пăрахать;

Çын каç енне 1-2 см пĕчĕкленет, иркÿлĕм çак виçе нормăна кĕрет;

Этемĕн 600 ытла мышца;

Янах шăммисем 72 кг пусăмпа хĕстереççĕ;

Организмра пĕр сехет хушшинче 100 г белок синтезланать;

70 кг йывăрăш çыннăн хевтин /энергия/ резерв 15 кг çу тĕртĕмĕнчен, 6 кг белокран, 0,9 кг углеводран /гликоген/ тăрать;

Арçын пуç мимин вăтам йывăрăшĕ 1375 грамм, хĕрарăмăн — 1275. Хăш-пĕр çынсен 900-2000 грамм таран пулма пултарать. Тургневăн пуç мимми — 2012 г, Павловăн — 1653 г, Менделеевăн — 1751 г, Гетен — 1210 г пулнă. Пуç миммин клеткисенчен 4 проценчĕ кăна ĕçлет, ыттисем резервра. Кашни секхетре 1 000 яхăн нейрон вилет;

Çурăм миммин вăрăммăшĕ: арçынсен 45 см яхăн, хĕрарăмсен — 40-42 см. Нейронĕсен диаметрĕ — 0,1 мм;

Эритроцитсем 120 талăк пурăнаççĕ, тромбоцитсем — 10-14 талăк, лимфоцитсем — 2 талăк, нейтрофил лейкоцичĕсем — 8-10 сехет;

## ХĔЛЛЕХИ ИЛЕМ



**Калайкасси шкулĕнче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Вера Родионовăн пÿлĕмĕнче шлюмбергер чечеке ларчĕ. Вера Михайловна хăйĕн савăнăçĕ çинчен пире пĕлтерчĕ. Çак чечек раштав тата нарăс уйăхĕнче /çултаlăкра икĕ хут!/ чечекĕпе савăнтарать. Чăн та хĕлле çакăн пек илемшĕн мĕншĕн савăнмалла мар.**

Шлюмбергер чечеке пăхсан ăна никам та кактус темĕ. Унăн йĕпписем те, тачка хулăн тунисем те çук. Анчах та вăл кактуссен йышне кĕрет.

Наукăра ăна—зигокактус ятпа пĕлеççĕ. Шлюмбергера килте ÿстерме çăмăл: вăл сивве те, ăшпа та, типĕпе нÿрре те тиркемест. Чечек Тухăç Бразилинчи нÿрĕке юратакан йывăççен вуллисемпе тымарĕсем çинче ÿсет.

Пĕрремĕш хут шлюмбергер çинчен 1858 ç. Чарльз Лемер çырса кăтартнă. Ятне вара ÿсен-тăрансене юратакан Федерик Шлюмбергер француза халалласа панă. Асăннă чечек тĕттĕм вырăна



юратать. Раççейре шлюмбергера «декабристка» теççĕ.

**Дима СОКОЛОВ,**
**9-мĕш кл.**

*Хисеплĕ вулаканăм!*

Пирĕн пата шăнкăравласа е çыру çырса тĕрлĕ конкурссенче хутшăнма пултаратăн. Хăвăр та мĕнле те пулин конкурс сĕнĕр. Чару çук!

Санăн шкулта савăнăçлă мероприяти иртрĕ. Тен, эсĕ мĕнле те пулин пăтăрмаха лекнĕ е мĕнле те пулин ĕçе курнă? Пире пĕлтерĕр, пирĕн пата çырăр. Тен, сан тусун е хĕр тантăшăн, вĕрентекенĕн е аçу-аннÿн Çуралнă кунĕ? Тепĕр тесен, пирĕн хаçат урлă сăлтавсăр та саламлама пулать. Çырупа пĕрле хаçатри купона ярса пама кăна манмалла мар.

Аслă вĕренÿ заведенине мĕнле кĕмелли условисем пулни çинчен е урăх ыйту пама пултаратăр. Психолог е тухтăр канашĕ кирлĕ — çырăр /анонимлăх гарантилетпĕр/.

Юлашки партăра начар вĕренекенсем кăна мар, пултаруллă çынсем те чылай ларнă. Эсĕ камсене пĕлетĕн? Сирĕн ĕçсене пичетлĕпĕр, чи лайăххисене кашни 2 уйăхра палăртăпăр.

